27-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ИЮНЬ
30
ЭРНЕКУН
128 (6623) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

## ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

### Генерал-полковника ЗАХАРОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт ҫарĕсем 120 километр сарлакĕш участокра ДНЕПР шывĕ урлă каҫнă та нимĕҫсен ҫав шывăн хĕвеланăҫ енче малтанах хатĕрлесе хунă оборонин иккĕмĕш тăрăхне татнă, вара паян, июнĕн 28-мĕшĕнче, Белоруссин пысăк область центрне — МОГИЛЕВ хулине, нимĕҫсен Минск енчи оборонин паха оперативнăй узелĕ пулса тăраканскерне, штурмласа тытса илнĕ, ҫавăн пекех тата тăшманпа ҫапăҫса ШКЛОВ хулипе БЫХОВ хулине туртса илнĕ.

ДНЕПР шывĕ урлă каҫассишĕн тата МОГИЛЕВ, ШКЛОВ, БЫХОВ хулисене туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче БОЛДИН генерал-лейтенантăн, ГРИШИН генерал-лейтенантăн, КРЮЧЕНКИН генерал-лейтенантăн, МУЛЬТАН генерал-майорăн, ЗАХАРОВ генерал-майорăн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-майорăн, НАУМОВ генерал-майорăн, СМИРНОВ генерал-майорăн, ЯКИМОВИЧ генерал-майорăн, ЩЕННИКОВ полковникăн, КОЛЕСНИКОВ полковникăн, ДРУЖИНИН полковникăн, ЮРИН полковникăн, СЛИЦ полковникăн, АРТЕМЬЕВ полковникăн, КОНОНЕНКО генерал-майорăн, ГАСПАРЯН генерал-майорăн, СКРЫЛЕВ генерал-майорăн, ГАЛАЙКО полковникăн, КРАСНОШТАНОВ генерал-майорăн, КИРИЛЛОВ генерал-майорăн, ГУСЕВ полковникăн, СУПРУНОВ полковникăн, КУСТОВ генерал-майорăн, САМАРСКИЙ генерал-майорăн, КАЗАК полковникăн, ДОЛМАТОВ генерал-майорăн ҫарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн СОКОЛЬСКИН, артиллери генерал-лейтенанчĕн БОДРОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ДЕГТЯРЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн КАРЕПИНĂН, артиллери генерал-майорĕн РАЗИНЦЕВĂН, МИХНО полковникăн, ЕРШОВ полковникăн, КАСЬЯНОВ полковникăн, ЧЕРНОБАЕВ полковникăн, КОРНЫШЕВ полковникăн, ЗЯБЛИКОВ полковникăн, БРЫЗГАЛИН полковникăн, МАЛОФЕЕВ полковникăн, УШАКОВ полковникăн, КУЛЕЕВ полковникăн, СОКОЛЕНКО полковникăн, КОРОЛЕВ полковникăн, ТУРЧАНИНОВ полковникăн, ЗЕРНОВ подполковникăн, ВОЙЦЕХОВСКИЙ подполковникăн, АХТЫРЧЕНКО подполковникăн, КИСЕЛЕВ подполковникăн, ВАРШАВСКИЙ подполковникăн, РУСЕЦКИЙ подполковникăн, ВЕРЗЕНЕВ подполковникăн, ФЕДОРОВ подполковникăн, БАБИЧ подполковникăн, ГЛЕСИН подполковникăн, ЕРЕМЕНКО подполковникăн, ПЕНТЯШКИН подполковникăн, КАМИНСКИЙ полковникăн, ШКУРАТОВ полковникăн артиллерисчĕсем; ЕРШОВ полковникăн, КОТОВ полковникăн, ЛУКАШЕВ полковникăн, ТУЛОВСКИЙ полковникăн, ТАТАРЕНКО подполковникăн, КОПЫЛОВ подполковникăн, СЕГЕЛИН майорăн, САМУИЛКИН майорăн, ГАЕВСКИЙ майорăн, НИКОЛАЕВ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ВЕРШИНИНĂН, ВОЛКОВ полковникăн, МАКСИМЕНКО майорăн, РУБЦОВ майорăн, АРБАТОВ майорăн, КОЛОМИН подполковникăн, КОТРУХ майорăн, БЕРШАНСКАЯ подполковникăн, ЕРМИЛОВ подполковникăн, СОКОЛОВ подполковникăн, ГЕТМАН полковникăн, ВУСС полковникăн, ПОКАЕВА подполковникăн, ЕЛИСЕЕВ подполковникăн летчикĕсем; инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн БОРДЗИЛОВСКИН, МЕЛЬНИКОВ полковникăн, СОКОЛОВ полковникăн, ДЕРГУНОВ полковникăн, ЛОГИНОВ полковникăн, ВИЗИРОВ полковникăн, ГУСЕВ подполковникăн, СМЫШЛЯЕВ майорăн, КАНАРЧИК майорăн саперĕсем тата ҫыхăну ҫарĕсен генерал-майорĕн БОРЗОВĂН, КОРБУТ подполковникăн, ЧИРКИН подполковникăн, ШАПОВАЛОВ майорăн, ГЛУШКОВ капитанăн, ВАЙНРУБ капитанăн, БОРИСОВ капитанăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕҫсене палăртса хăварас тесе, ДНЕПР шывĕ урлă каҫассишĕн тата МОГИЛЕВ, ШКЛОВ, БЫХОВ хулисене туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăҫсене «ВЕРХНЕ-ДНЕПРОВСКИ», «МОГИЛЕВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июнĕн 28-мĕшĕнче, 22 сехетре, хамăр Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, икҫĕр ҫирĕм тăватă тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 2-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, ДНЕПР шывĕ урлă каҫнăскерсене тата МОГИЛЕВ, ШКЛОВ, БЫХОВ хулисене туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ДНЕПР шывĕ урлă каҫассишĕн тата МОГИЛЕВ, ШКЛОВ, БЫХОВ хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

*Верховный Главнокомандующи*
*Совет Союзĕн Маршалĕ* ***И. СТАЛИН.***

1944 ҫулхи июнĕн 28-мĕшĕ.

## ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

### Арми генералне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт ҫарĕсем, ҫав тери хăвăрт наступлени туса пырса, паян, июнĕн 28-мĕшĕнче, тăшмана инҫерен ҫавăрса илмелли маневр туса, ОСИПОВИЧИ хулипе паха чугун ҫул узелне туртса илнĕ, ҫапла вара фронт ҫарĕсем нимĕҫсен БОБРУЙСК патĕнчи группировкине пĕтĕмпех хупăрласа илнĕ.

ОСИПОВИЧИ хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче БАТОВ генерал-лейтенантăн, ИВАНОВ генерал-майорăн, АЛЕКСЕЕВ генерал-майорăн, САНКОВСКИЙ генерал-майорăн, МОРОЗОВ полковникăн ҫарĕсем; танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ПАНОВĂН танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн РУДЕНКОН летчикĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕҫсене палăртса хăварас тесе, ОСИПОВИЧИ хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăҫсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июнĕн 28-мĕшĕнче, 23 сехетре, хамăр Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, икҫĕр ҫирĕм тăватă тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, ОСИПОВИЧИ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ОСИПОВИЧИ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

*Верховный Главнокомандующи*
*Совет Союзĕн Маршалĕ* ***И. СТАЛИН.***

1944 ҫулхи июнĕн 28-мĕшĕ.

## США Посолĕ В. А. Гарриман господин И. В. Сталин юлташа Рузвельт Президентăн Сталинградпа Ленинград хулисем валли янă Хисеплĕ грамотисене пани

Июнĕн 26-мĕшĕнче, Кремльте, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ В. А. Гарриман господин СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне И. В. Сталин юлташа Рузвельт Президент Сталинградпа Ленинград хулисем валли, ҫав хуласене геройла хӳтĕленине палартас майпа, янă Хисеплĕ грамотăсене панă. Грамотăсене Рузвельт господин Пĕрлешӳллĕ Штатсен халăхĕ ячĕпе алă пуснă.

Хисеплĕ грамотăсене панă чухне СССР Ют Ҫĕршыв Ĕҫĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ пулнă.

## США Президенчĕ Франклин Д. Рузвельт господин И. В. Сталин юлташ патне янă ҫыру

Манăн хаклă Маршал Сталин,

Эпĕ Сирĕн патна Сталинградпа Ленинград валли — Америка халăхне чĕререн тĕлĕнтерсе савăнтарнă ҫав хуласем валли икĕ грамота ярса паратăп. Ҫав икĕ хулана питех те пĕлсе хӳтĕленĕ гражданĕсен геройлăхĕ Пĕрлешӳллĕ Штатсен халăхне авхалантарчĕ ҫеҫ мар, пирĕн икĕ халăхăн туслăхне татах та ытларах ҫирĕплетме пулăшрĕ. Сталинградпа Ленинград асăнă хăватпа ҫирĕплĕхе палăртакан паллăсем пулса тăчĕҫ, вĕсем пире тăшмана хирĕҫ тăма май пачĕҫ, вĕсем пире юлашкинчен хамăр тăшмансен агрессине ĕҫтерме май парĕҫ.

Ҫак грамотăсене икĕ паттăр хулана парса, Эсир ҫав хуласен гражданĕсене эпĕ вĕсемпе туслă пулса тăни ҫинчен тата вĕсен геройлăхĕпе тĕлĕнсе савăнни ҫинчен, пирĕн ҫынсем хăйсем пĕр-пĕрне чĕререн ăнланассине, пирĕн пĕрлехи кĕрешĕве палăртса тăраканскере, малашне те вăйлатса пырассине эпĕ ĕненсе тăни ҫинчен пĕлтерме май тупатăр тесе шанса тăратăп.

Пĕтĕм чĕререн Сирĕн **ФРАНКЛИН Д. РУЗВЕЛЬТ.**

1944 ҫулхи майăн 25-мĕшĕ.
Шурă Ҫурт, Вашингтон

### СТАЛИНГРАДА ПАМАЛЛИ ГРАМОТА

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен халăхĕ ячĕпе эпĕ ҫак грамотăна Сталинград хулине, ăна паттăррăн хӳтĕлекенсен ĕҫĕ пе эпир тĕлĕнсе савăннине палăртас тесе, паратăп. Тăшман 1942 ҫулхи сентябрĕн 13-мĕшĕнчен пуҫласа 1943 ҫулхи январĕн 31-мĕшне ҫитиччен Сталинграда хупăрласа тăнă чухне ҫав хулана хӳтĕлекенсем кăтартнă паттăрлăхпа хастарлăх, вĕсен хăвачĕ, вĕсем хăйсен пурнăҫĕсене пĕрхенмесĕр кĕрешни мĕнпур ирĕклĕ ҫынсен чĕрисене ĕмĕр-ĕмĕр хавхалантарса тăрĕҫ. Вĕсем тунă чаплă ҫĕнтерӳ тăшман танăнса пынин хумне чарса лартрĕ тата Союзлă Нацисем агресси вăйĕсене хирĕҫ туса пыракан вăрҫăра хамăр майлă улшăну тунă пункт пулса тăчĕ.

**ФРАНКЛИН Д. РУЗВЕЛЬТ.**

1944 ҫулхи майăн 17-мĕшĕ.
Вашингтон.

### ЛЕНИНГРАДА ПАМАЛЛИ ГРАМОТА

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен халăхĕ ячĕпе эпĕ ҫак грамотăна Ленинград хулине, унăн паттăр воинĕсене, унăн шанчăклă арҫынĕсемпе хĕрарăмĕсене тата ачисене ĕмĕр асăнмалăх паратăп. Ленинград ҫыннисем, вĕсене тăшман ытти пĕтĕм халăхран уйăрса илсе хупăрласа тăнă чухне, тăшман тăтăшах бомбăсем пăрахса тăнă пулин те, Ленинград ҫыннисем сивĕпе выҫăпа, чир-чĕрсемпе калама ҫук асапланнă пулин те, 1941 ҫулхи сентябрĕн 8-мĕшĕпе 1943 ҫулхи январĕн 18-мĕшĕ хушшинчи чи йывăр тапхăра хăйсен юратнă хулине ăнăҫлăн хӳтĕлесе тăчĕҫ, ҫапла вара Совет Социализмлă Республикăсен Союзĕнчи халăхсен тата пĕтĕм тĕнчери халăхсен, агресси вăйĕсене хирĕҫ кĕрешекенскерсен, нимĕнрен пăрăнми вăй-хăватне кăтартса пачĕҫ.

**ФРАНКЛИН Д. РУЗВЕЛЬТ.**

1944 ҫулхи майăн 17-мĕшĕ.
Вашингтон.

## Рузвельт грамотисене США Посолĕ Гарриман панă чухне И. В. Сталин юлташ калани

Эпĕ Рузвельт Президентăн грамотисене, пирĕн государствăсем хамăр халăхсен ирĕклĕхĕшĕн тата этемлĕхе малалла аталантарассишĕн пĕр-пĕрин хушшинче ăнăҫлăн ҫирĕплетсе пыракан туслăха палăртакан символ вырăнне хурса, йышăнатăп.

Грамотăсене Ленинградпа Сталинград хулисен представителĕсене парăпăр.

## ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

### Арми генералне МЕРЕЦКОВА

КАРЕЛИ фрончĕн ҫарĕсем, тăшмана шалтан ҫавăрса илмелли маневр туса тата Онега кӳллин хĕвеланăҫ хĕррине десант антарса, Карело-Финн Республикин столицине — ПЕТРОЗАВОДСК хулине нимĕҫсемпе финсен захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă, КОНДОПОГА хулипе чугун ҫул станцине туртса илнĕ, ҫапла вара Кировски (Мурмански) чугун ҫула пĕтĕмпех тăшманран тасатнă.

ПЕТРОЗАВОДСК хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче 1-мĕш рангри капитанăн АНТОНОВĂН, 2-мĕш рангри капитанăн КРОХИНĂН, ЕЛЬНИКОВ капитан-лейтенантăн, 3-мĕш рангри капитанăн НИКУЛИНĂН, МОЛЧАНОВ капитанăн морякĕсем; ГОРЕЛЕНКО генерал-лейтенантăн, СОПЕНКО генерал-майорăн, ЦЫГАНКОВ полковникăн, АЛЕКСЕЕВ полковникăн, ПИЛЬЩИКОВ подполковникăн ҫарĕсем; ГЛОТОВ полковникăн артиллерисчĕсем; ИВАНЧИХИН полковникăн саперĕсем тата 2-мĕш рангри капитанăн РОЖДЕСТВЕНСКИН связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕҫсене палăртса хăварас тесе, ПЕТРОЗАВОДСК хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăҫсене «ПЕТРОЗАВОДСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июнĕн 29-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ виҫҫĕр ҫирĕм тăватă тупăпа ҫирĕм тăватă хут пĕр харăс персе, Карели фрончĕн паттăр ҫарĕсене, Карело-Финн Республикин столицине — ПЕТРОЗАВОДСК хулине — ирĕке кăларнăскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ПЕТРОЗАВОДСК хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫсемпе финсен захватчикĕсене — вилĕм!

*Верховный Главнокомандующи*
*Совет Союзĕн Маршалĕ* ***И. СТАЛИН.***

1944 ҫулхи июнĕн 29-мĕшĕ.

## ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

### Арми генералне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт ҫарĕсем, нимĕҫ ҫарĕсен Бобруйск хули патĕнче ҫавăрса илнĕ группи хирĕҫ тăнине ҫĕмĕрсе тăкса, паян, июнĕн 29-мĕшĕнче, МИНСК хулипе БАРАНОВИЧИ хули ҫинелле каймалли вырăнсене хӳтĕлесе тăракан БОБРУЙСК хулипе пысăк чугун ҫул станцине, ҫулйĕрсен паха узелĕ тата нимĕҫсен оборонин тĕреклетнĕ хăватлă пункчĕ пулса тăраканскере, штурмласа туртса илнĕ.

БОБРУЙСК хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче ГОРБАТОВ генерал-лейтенантăн, РОМАНЕНКО генерал-лейтенантăн, БАТОВ генерал-лейтенантăн, УРБАНОВИЧ генерал-майорăн, АЛЕКСЕЕВ генерал-майорăн, ТЕРЕМОВ генерал-майорăн, ГРИГОРЬЕВСКИЙ генерал-майорăн, МОХИН генерал-майорăн, ЖАБРЕВ генерал-майорăн, МАКАРОВ генерал-майорăн, ПОГРЕБНЯК полковникăн, МАССОНОВ полковникăн, ЛУКИН полковникăн, ВДОВИН полковникăн, ГОРИШНЫЙ генерал-майорăн, ВОЛКОВ полковникăн, ҫарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн КАЗАКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн БЕСКИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ШАМШИНĂН, ГОНЧАРУК подполковникăн, АКИМУШКИН полковникăн, ОЛЕЙНИК полковникăн, МЕРКУЛОВ инженер-полковникăн, ОРЛОВ подполковникăн, ОСТРЕЙКО подполковникăн, ЦАРЕВ полковникăн, ПАЛЬГОВ майорăн артиллерисчĕсем; танковăй ҫарсен генерал-майорĕн БАХАРОВĂН, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ПАНОВĂН, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ФИЛИППОВĂН, КУЗНЕЦОВ полковникăн, БАРАНЮК подполковникăн, ТРУШКИН подполковникăн, ШУЛЬГИН полковникăн, КОЖАНОВ полковникăн, СОКОЛОВ подполковникăн, РЫЖАНОВ полковникăн, БАЛЫКОВ полковникăн, ВАСИЛЬЕВ полковникăн, ТИДЕМАН полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн РУДЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ОСИПЕНКĂН, авиаци генерал-майорĕн КАРАВАТСКИН, авиаци генерал-майорĕн КРУПСКИН, авиаци генерал-майорĕн КОМАРОВĂН, авиаци генерал-майорĕн БАЙДУКОВĂН, БОРИСЕНКО полковникăн, ЧИРВА полковникăн летчикĕсем; 1-мĕш рангри капитанăн ГРИГОРЬЕВĂН, 2-мĕш рангри капитанăн ЛЯЛЬКĂН, 3-мĕш рангри капитанăн ПЕСКОВĂН морякĕсем; ГАБЕР полковникăн, ПРУСС полковникăн саперĕсем тата ЖУКОВ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕҫсене палăртса хăварас тесе, БОБРУЙСК хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăҫсене «БОБРУЙСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июнĕн 29-мĕшĕнче, 23 сехетре хамăр Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, икҫĕр ҫирĕм тăватă тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, БОБРУЙСК хулине туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн Эсир ертсе пыракан ҫарсене, БОБРУЙСК хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

*Верховный Главнокомандующи*
*Совет Союзĕн Маршалĕ* ***И. СТАЛИН.***

1944 ҫулхи июнĕн 29-мĕшĕ.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### ИЮНĔН 28-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнĕн 28-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем ПОЛОЦК хулинчен кăнтăртарахра, тăшман хирĕҫ тăнине тата унăн кӳлĕсем хушшинчи инженерла чăрмавĕсене ҫĕнтере-ҫĕнтере, малалла наступлени туса пынă, Витебск облаҫĕнчи район центрне ЛЕПЕЛЬ хулине туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ЧЕРЧИЦЫ, КРАСНОЕ, ЗАРЕЧЬЕ, ЗЕМЦЫ, ЗАМОШЬЕ, СТАРОЕ ЛЯДНО, ВЕЛИКОЕ ПОЛЕ.

МИНСК хули енче пирĕн ҫарсем, ăнăҫлă наступление вăйлатса пырса, Минск облаҫĕнчи район центрĕсене ХОЛОПЕНИЧИ хулине тата КРУПКИ хулипе чугун ҫул станцине, Могилев облаҫĕнчи район центрне КРУГЛОЕ ялне туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата тăшманпа ҫапăҫса халăх пурăнакан ытти 400 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — СТАРОСЕЛЬЕ, ЛАТЫГОЛИЧИ, МОИСЕЕВЩИНА, ПУПЕЛИЧИ, КОСТРИЦА (БОРИСОВ хулинчен 13 километр ҫурҫĕр-хĕвелтухăҫнерехре), ИГРУШКИ, СЛАВЕНИ, КОХАНОВО ятлă пысăк ялсем тата КОХАНОВО, СЛАВЕНИ ятлă чугун ҫул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт ҫарĕсем 120 километр сарлакĕш участокра ДНЕПР шывĕ урлă каҫнă та нимĕҫсен ҫав шывăн хĕвеланăҫ енче малтанах хатĕрлесе хунă оборонин иккĕмĕш тăрăхне татнă, вара Белоруссин пысăк область центрне МОГИЛЕВ хулине штурмласа туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата тăшманпа ҫапăҫса Могилев облаҫĕнчи район центрĕсене ШКЛОВ хулипе БЫХОВ хулине тата халăх пурăнакан ытти 450 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ПОДКНЯЖЕНЬЕ, УЛАНОВО, ЧЕРНОЕ, ЧЕРНОРУЧЬЕ, ДУБРОВКА, БРАКОВО, СЕНЬКОВО, 1-МĔШ ГОЛЬНЕЦ, 2-МĔШ ГОЛЬНЕЦ, НОВАЯ ЛЕЖНЕВКА, СТАРАЯ ЛЕЖНЕВКА, БОВШЕВ, ЛИПОВКА, ХОДУТИЧИ, МОКРОЕ ятлă пысăк ялсем тата КОПЫСЬ, ШКЛОВ, ЛОТВА, ПОЛЫКОВСКИЕ ХУТОРА, БУЙНИЧИ, ДАШКОВКА, БАРСУКИ, БОРКОЛАБОВО, ЯМНИЦА, БЫХОВ чугун ҫул станцийĕсем.

МОГИЛЕВ хулишĕн пынă ҫапăҫура нимĕҫсен 12-мĕш пехотнăй дивизине аркатса тăкнă, унăн командирне Бамлер генерал-лейтенанта штабĕ-мĕнĕпех тытăна илнĕ, ҫавăн пекех тата МОГИЛЕВ хули комендантне ЭРДМАНСДОРФ генерал-майора та тытăна илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт ҫарĕсем, ăнăҫлă наступление вăйлатса пырса, ОСИПОВИЧИ хулипе паха чугун ҫул узелне туртса илнĕ, БОБРУЙСК хули районĕнче ҫавăрса илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкассишĕн ҫапăҫнă. Ҫак ҫапăҫусенче фронт ҫарĕсем кун каҫиччен халăх пурăнакан 200 пункта ытла ирĕке кăларнă. Вăл шутра — Могилев облаҫĕнчи район центрĕ КЛИЧЕВ хули, Минск облаҫĕнчи район центрĕ СТАРЫЕ ДОРОГИ хулипе чугун ҫул станцийĕ, ЧИГИРИНКА, ОРЕХОВКА, ВИРКОВ, БАЦЕВИЧИ, СЕРГЕЕВИЧИ, ЛЮБОНИЧИ, СТУПЕНИ, БЕРЕЗИНСКИЙ, ФОРШТАДТ, ШАТКОВО, ТЕПЛУХА, ПРОТАСЕВИЧИ, КАЛЮГА, НОВО-АНДРЕЕВКА, БАРБАРОВ, БОБРОВИЧИ, ПОРЕЧЬЕ ятлă пысăк ялсем тата НЕСЕТА, ТАЧЕНКА, ТЕЛУША, САВИЧИ, БЕРЕЗИНА ятлă чугун ҫул станцийĕсем.

ОНЕГА кӳллипе ЛАДОГА кӳлли хушшинче пирĕн ҫарсем, финсем хирĕҫ тăнине ҫĕнтере-ҫĕнтере, 35 километр таран малалла кусна, ШОКША, ПЕДА-СЕЛЬГА, КЕСКОЗЕРО, ВИЛЛАЛА, ВЕХКУ-СЕЛЬГА, СЯНЬДЕБА, ВЕРХНИЙ КОНЕЦ, АЛАНГА, ГАВРИЛОВО, ВИДЛИЦА, УСТЬ-ВИДЛИЦА ятлă ялсене туртса илнĕ.

Финн заливĕнчи ВЫБОРГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем тăшмантан УРАН-САРИ утравне тасатнă. ТРОНГСУНД (Урас) хулипе портне тата чугун ҫул станцине туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусем пулман.

Июнĕн 27-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем мĕнпур фронтсенче нимĕҫсен 109 танкне ҫĕмĕрсе тăкнă, сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 61 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

### ПИРĔН АВИАЦИ БАРАНОВИЧИ, ЛУНИНЕЦ, МИНСК, ПОЛОЦК ЧУГУН ҪУЛ УЗЕЛĔСЕНЕ ТАТА БОРИСОВ ЧУГУН ҪУЛ СТАНЦИНЕ ЙЫШЛĂН ВĔҪСЕ КАЙСА ТАПАННИ

Июнĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух ҫĕрле пирĕн авиаци Барановичи, Лунинец, Минск, Полоцк чугун ҫул узелĕсене тата Борисов чугун ҫул станцине вăйлăн пыра-пыра ҫапнă. Тапăннă вăхăтра ҫав чугун ҫул узелĕсемпе станцире поездсем нумай тăнă.

Бомбăсем пăрахнине пула, Барановичи чугун ҫул узелĕнче 23 тĕлте вăйлă пушар тухнă, темисе вăйлă взрыв пулнă. Узелтан каялла таврăннă чухне пирĕн самолетсен экипажĕсем ҫавăнти пушарсене 150 километр кайсан та лайăх курса пынă. Лунинец чугун ҫул узелĕнче пирĕн летчиксем ҫарсемпе техника тиенĕ темиҫе эшелона ҫĕмĕрсе тăкнă. Узел территорийĕнче 10 тĕлте пушар тухнă, 6 тĕлте вăйлă взрывсем пулнă. Минск чугун ҫул узелĕнче 13 тĕлте пушар тухнă, вагонсемпе ҫар складĕсем ҫуннă. Полоцкра пушар чугун ҫул узелĕн вăтаҫĕртн пайне пĕтĕмпех ярса илнĕ. Пирĕн авиаци уйрăмах Борисов станцине вăйлă тапаннă. Борисов станцийĕнчи чугун ҫулсем ҫинче ҫав чухне 20 эшелон таран тăнă. Станцин пĕтĕм территорийĕнче бомбăсем сура-сура кайнă. 15 пушар тухнă. 16 взрыв пулнă.

Пирĕн 4 самолет хăйсен базисене таврăнман

Ÿнерчĕк çинче: Калинино районĕнчи вăрлăх хуçалăхĕн агрономĕ С. В. Воробьев юлташ.
Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

## ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

### МТС-ри КОММУНИСТСЕМ

Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем кăçал, пĕтĕм республикăри колхозсем пекех суракине ăнăçлăн ирттерсе, вăйлă тырпул никĕсне хывса хăварчĕç. Çак ĕçре колхозниксемпе колхозницăсене пирĕн МТС коллективĕ пысăк пулăшу пачĕ. МТС сурхи ĕçсен планне ирттерсе тултарчĕ, горючи чылай перекетлерĕ. Хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн халĕ те вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлет.

Колхозсене вăйлă тырпул туса илме пулăшас ĕçре, яланхи пекех, коммунистсем малти вырăнта тăраççĕ. МТС-ăн пуçламĕш парторганизацийĕнче пурĕ 9 коммунист. Вĕсенчен 4-шĕ трактор бригадисен бригадирĕсем. Коммунист И. Андреев юлташ ертсе пыракан бригада сураки ĕçĕсен планне 169 процент тултарчĕ, 278 килограмм горючи перекетлерĕ. Çак çитĕнĕве бригадăри вăйсене тĕрĕс вырнаçтарса тухнипе, ĕç дисциплинине çирĕплетнипе тата трактористсен ответлăхне ÿстернипе тунă.

Андреев бригадир трактористсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăнă, вĕсене кулленхи ĕçре пулăшнă. Çавăнпа ĕнтĕ унăн бригадинчи Родионова, Андреева, Петрова, Ефимова трактористкăсем пурте сурхи ĕçсен планне ытлашшипех тултарнă. Çапла бригада, МТС-ра малти вырăна тухса, дирекципе пуçламĕш парторганизацин куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Халĕ бригада ялава хăй аллинчех хăварассишĕн кĕрешет.

ВКП(б) членĕн кандидачĕсем Фомин, Кольцов, парти членĕ Питирнов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем те кая юлман. Вĕсем пурте сурхи ĕçсен планне ирттерсе тултарчĕç, горючи сахал мар перекетлерĕç. Çавăн пекех В. Петухов юлташ ертсе пыракан бригада та лайăх ĕçлет.

Пуçламĕш парторганизаци бригадăсенче политикăллă-массăллă ĕç пуçа пыма вĕсем çумне агитаторсем çирĕплетнĕ. Агитаторсем трактористсене Сталин юлташăн приказĕсене тĕплĕн ăнлантарса параççĕ, тĕнчери тата фронтсенчи хыпарсене пĕлтерсех тăраççĕ. Политикăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркелени парторганизаци таврă актива ытларах пĕтĕçтерме, парторганизаципе ĕçлекенсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетме май пачĕ. Трактористсенчен виçĕ çын ВКП(б) ретне кĕме хатĕрленсе çитеççĕ ĕнтĕ.

Çураки ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăнах МТС-ри трактористсемпе комбайнерсен, рабочисемпе служащисен пухăвне ирттертĕмĕр. Унта тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленесси çинчен сÿтсе-явса, татăклă мероприятисем палăртрăмăр. Халĕ кашни бригадăрах хĕрÿллĕ ĕç пырать, МТС коллективĕнчи кашни çын лайăхрах ĕçлеме тăрăшать. Уборкăна тĕплĕн хатĕрленессишĕн ăмărту анлăн сарăлса кайрĕ. Коммунистсем çак ăмăртăва ертсе пыраççĕ.

**И. АРГАНДЕЕВ.**
МТС-ри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ.

### АРТЕЛĔН ÇИТĔНĔВĔСЕМ

Мăн Шахчурари лесхимартельте (Шупашкар р.) отчетпа суйлав пухăвĕ пысăк активлăхпа пулса иртрĕ. Артель членĕсем пухура артель ĕçĕ лайăхланса пынине тата унăн ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртрĕç.

Артель чылай вăхăт хушши кая юлса пынă. Председатель пулса отечественнăй вăрçă инвалидĕ Иванов юлташ ĕçлеме тытăннăранпа унăн ĕçĕ татăкланах лайăхланнă. Вăл кăçал 5 уйăхри производство планне 164 процент тултарнă. Продукци туса кăларасси ÿссех пырать. Артельте çĕнĕ производствăсем организациленĕ. Çапла, куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли 5 уйăхри плана 126 процент тултарнă.

Артель членĕсем продукци туса кăларассине малалла тата та ÿстерсе пырас тĕлĕшпе паха сĕнÿсем пачĕç.

**М. ИЛЬИН.**

### Иккĕмĕш Военнăй заемăн пĕрремĕш вылявĕ

Июнĕн 25-мĕшĕнче Мускавра Союзсен çуртĕн Октябрь залĕнче Иккĕмĕш Военнăй заемăн пĕрремĕш вылявĕ пулса иртнĕ. Вылявра пĕтĕмпе 1 миллион та 725 пин выигрыш, 460 миллион та 280 пин тенкĕлĕх пулнă. (ТАСС).

## ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

### *Чăваш АССР Верховный Совечĕн суйлавне тепĕр срока куçарасси çинчен*

Чăваш АССР Верховный Совечĕн суйлавне 1945 çулхи июнь уйăхĕччен куçарас, Чăваш АССР-ĕн пĕрремĕш созыври Верховный Совечĕн полномочийĕсене çав срокăччен тăсас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1944 çулхи июнĕн 29-мĕшĕ.

## РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

### Республикăри колхозсем июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне çĕртме тумалли, çум çумламалли, утă çулса пухмалли тата силос хывмалли плансене мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан СВОДКА (процентпа)

| Районсем | Çĕртме тунă | Пĕрчĕллĕ тырăсене çумланă | Улăхри утта çулнă | Силос хывнă |
|---|---|---|---|---|
| Улатăр | 13,8 | 100,0 | 26,5 | 5,7 |
| Элĕк | 72,1 | 100,0 | 2,5 | 3,2 |
| Вăрнар | 66,0 | 100,0 | 10,9 | 4,8 |
| Йĕпреç | 31,3 | 49,0 | 78,3 | 22,0 |
| Ишлей | 40,1 | 100,0 | 8,3 | — |
| Калинино | 49,5 | 100,0 | 19,2 | 2,2 |
| Канаш | 55,6 | 100,0 | 102,0 | 7,5 |
| Куславкка | 48,6 | 100,0 | 1,0 | 7,5 |
| Комсомольски | 46,7 | 83,8 | 43,0 | 22,1 |
| Красноармейски | 104,2 | 91,0 | 13,4 | 4,3 |
| Хĕрлĕ Чутай | 54,6 | 100,0 | 23,7 | — |
| Кувакино | 1,3 | 40,7 | 1,4 | 4,1 |
| Сĕнтĕрвăрри | 65,6 | 98,5 | — | 16,9 |
| Муркаш | 46,2 | 97,4 | 34,0 | 33,4 |
| Октябрьски | 39,7 | 81,4 | — | — |
| Первомайски | 32,9 | 100,0 | 56,8 | — |
| Пăрачкав | 21,5 | 74,7 | 41,6 | 9,4 |
| Советски | 66,3 | 85,5 | 16,6 | — |
| Сĕнтĕр | 84,5 | 97,4 | 11,6 | 8,0 |
| Вăрмар | [illegible] | 100,0 | 30,6 | 6,4 |
| Çĕрпÿ | 66,1 | 80,6 | 17,3 | — |
| Шупашкар | 77,1 | 61,8 | 4,4 | [illegible] |
| Чкаловски | 23,2 | 96,4 | 120,0 | — |
| Чурачăк | 76,8 | 100,0 | 9,2 | 53,7 |
| Шăмăршă | 10,1 | 68,5 | — | — |
| Шăхасан | 46,4 | 100,0 | 25,2 | 9,5 |
| Çĕмĕрле | 16,7 | 71,5 | 31,3 | 34,4 |
| Етĕрне | 35,4 | 54,0 | 14,8 | 26,4 |
| Елчĕк | 55,5 | 100,0 | 36,0 | 15,8 |
| Тăвай | 28,5 | 84,5 | 11,4 | 5,0 |
| Шупашкар хули | 75,9 | 72,2 | — | — |
| Пĕтĕмпе | 45,9 | 88,2 | 19,2 | 10,8 |
| Июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне пулнă | 29,1 | 74,7 | — | — |

### Йĕпреç МТС комбайнсене юсаса пĕтернĕ

ЙĔПРЕÇ, июнĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС-ри трактористсемпе комбайнерсем тата мастерскойĕнчи рабочисемпе механиксем комбайнсене юсанă çĕрте фронтри пек ĕçлерĕç. Июнĕн 28-мĕшĕ тĕлне МТС-ри 12 комбайна юсаса пĕтерчĕç. Вĕсене паян колхозсене яратпăр. Молотилкăсене юсас ĕç те аван пырать, 13 молотилкăран 8 молотилкăне юсаса пĕтертĕмĕр.

Комбайнсемпе ĕçлеме халĕ комбайнер помощникĕсене хатĕрлетпĕр. Курсра пурĕ 12 çын вĕренет. Вĕсем тырă вырма тухиччен вĕренсе пĕтереççĕ.

Колхозсенче халĕ комбайнсемпе пухмалли тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатаççĕ.

Тракторсемпе çулталăкра тумалли ĕç планне (тырă çапассисĕр пусне) МТС 60 процент ытла тултарнă. Яковлев, Семенов, Максимов, Макаров юлташсем ертсе пыракан бригадăсем çулталăкри плана çак кунсенчех тултараççĕ.

**Г. ИВАНОВ.**
МТС директорĕ.

### Вăрмарсен примерĕпе

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Вăрмар районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен паха пуçарăвне йышăнса, чылай колхозсем обществăллă выльăхсем валли апат хатĕрлеме тытăнчĕç. Хурăнсурти Чапаев ячĕпе тăракан колхоз çамрăкĕсем çак кунсенче 15 тонна, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 10 тонна силос хыврĕç.

Уйрăм колхозсем клевер çулма тухрĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 3 гектар, «Победа» колхозра — 2,5 гектар, «Волга» колхозра — 1 гектар клевер çулнă. «Самолет» колхоз членĕсем путексем валли 95 лав милĕк тата 18 пăт арăмути хатĕрлерĕç. Вĕсем те ырансăр клевер çулма тухаççĕ.

**Х. ЛИСИН.**

### Уяр çанталăкăн кашни сехечĕпе усă курмалла

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июнĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 55 колхозран 20 колхозĕ утă çулма тухрĕç. Çумăрлă кунсем пуçланиччен пирĕн колхозсем 756 гектар çинчи утта çулчĕç, çав шутран 200 гектарне типĕтсе купалама ĕлкĕрчĕç. 500 гектар çинчи утта пуçтарса илеймен-ха. Уяр çанталăкăн кашни сехечĕпе усă курса типĕтес тесе, колхозсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Колхозсенче пурĕ 3.921 гектар çĕртме тунă, плана 50 процент ытларах тултарнă. МТС тракторĕсем пурĕ те 400 гектар çеç сухаласа плана 12 процент кăна тултарчĕç.

Районра малтă пыракан «Искра», «Ударник», «Мурат», Пушкин ячĕпе тăракан колхозсем çĕртме туса пĕтерчĕç.

Çĕртме тăвасси уйрăмăнах Урмаел ялсоветĕнчи колхозсенче тата «Оборона» колхозра чăтма çук начар пырать.

Нумай колхозсем тырпулсене пухса кĕме хатĕрленес енĕпе те аван ĕçлеççĕ. Паянхи кун тĕлне 98 жнейкăран 69 жнейкине юсаса лартнă, 32 молотилка ĕçлеме хатĕр. Халĕ кашни колхозрах тырпулсене пухса кĕртмелли ĕç планĕсене тăватпăр. Çак ĕçре колхозсене пулăшма ялхуçалăх специалисчĕсене пурне те мобилизацилерĕмĕр.

**Л. ИНЕРКИНА,**
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

### Уйхир ĕçĕсене малалла та ăнăçлăн тăвăпăр

СОВЕТСКОЕ. Пирĕн «Спутник колхозника» колхоз сураки планне 102 процент тултарчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç.

Сухаçăсем Д. Архипов, Ф. Архипов, З. Филиппов тата П. Егорова юлташсем кулленхи нормăна 120 процентран пуçласа 130 процента çити тултарса пычĕç. Вĕсем ирхине ирех ĕçе каятчĕç те каçхине хĕвел анас умĕн çеç ĕçрен таврăнатчĕç. Агротехника ыйтăвĕсене яланах пурнăçласа пынипе, ĕçĕн пахалăхĕ те лайăх пулчĕ. Яковлевăпа Семенова юлташсем те тăрăшса ĕçлерĕç. Тырă акакан В. Никандров юлташ кашни кунах нормăна 150 процент тултарчĕ.

Лашасем ака çинче лайăх ĕçлерĕç, ку тĕлĕшпе старши конюх Т. Кузьмин юлташăн ĕçне пысăк хака хумалла. Вăл лашасене тăрăшса пăхрĕ, çавна пула вĕсем кĕрÿ ĕçре ывăнмарĕç.

Сураки вăхăтĕнче пирĕн колхозниксем уйрăм сдельщинăпа ĕçлерĕç. Ака çинче ĕçлекенсене куна икĕ хутчен колхоз столовăйĕнче апатлантартăмăр.

Суртырисем тикĕс шăтса тухрĕç. Вĕсене çумкурăксенчен пĕр хут тасатса тухрăмăр.

Халĕ пикенсех çĕртме пуссине тислĕк кăларатпăр, çийĕнчех сухаласа пыратпăр. Çак кунсенче çĕртме тăвас ĕçе те вĕçлетпĕр.

Утă çулма хатĕрленсе çитрĕмĕр. Колхозра хĕрÿ ĕç пĕр самантлăха та чарăнмасть. Уйхир ĕçĕсене малалла та ăнăçлăн туса пырассишĕн кĕрешетпĕр.

**П. МИТРЯКОВ,**
Колхоз председателĕ.

## Колхоз уставне хисеплемен çĕрте

Шупашкар районĕнчи «Волгăрь» колхоз суракине ытла та вăрăма тăснă. Кунта ĕç пахалăхĕшĕн тăрăшмаççĕ. Колхозри ĕç дисциплини япăхса кайнă, нумай колхозниксем ĕçе йĕркеллĕ тухмаççĕ. Уйрăм сдельщина çинчен асăнмаççĕ те.

Колхозниксенчен нумайăшĕсем çак вăхăта çитсе те 5—6 ĕçкунĕ çеç тунă. Самахран, Орехова — 5,22 ĕçкунĕ, Федорова — 6,75 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ, Морозова вара пĕр ĕçкунĕ те туман. Ун пеккисем колхозра татах та пур.

Тÿррипе каласан, колхозниксем ĕçе йĕркеллĕ тухманни пĕтĕмпех колхоза ертсе пыракансенчен килет. Колхозри учета пăтраштарса янă. Колхозниксене вĕсен ĕç кĕнекисем çине виçшер уйăх ĕçкунĕсем лартса паман. Колхозри хуçалăха йĕркелесе пыракан çук.

Выльăх-чĕрлĕх йышĕ те кунта тăтăшах чакса пырать. Планпа пăхнă 30 ĕне вырăнне — 26 ĕне, 40 сурăх вырăнне — 18 çеç юлнă. Фермăри выльăхсен йышне ÿстерес тесен, колхозниксенчен контрактаци йĕркипе çамрăк выльăхсем сутăн илмелле, анчах кунта ун çинчен шутламаççĕ те.

Колхоз выльăхĕсем вилнишĕн кам айăплине шыраса тупман, вĕсене ответ тыттарас пирки ниçта та сÿтсе-явман.

Паллах, çак çитменлĕхсемшĕн колхозниксем мар, колхоз председателĕ Гурьянов айăплă. Гурьянова колхозниксем хăй куç умĕнчех: — Колхоза юхăнтаракан, ĕçлеме чăрмантаракан, — тесе вăрçаççĕ. Ăна никам та хисеплемест, итлемест. Вара колхозниксем пухăнсан вара:

— Мĕнле намăс мар-ши çав Гурьянова? Вăрçă вăхăтĕнче çавăн пек йĕркесĕр ĕçлени фронт умĕнче айăпа кĕни пулмасть-ши? — теççĕ. Колхозниксем тĕрĕс калаççĕ. Гурьянов колхозри ĕçе юхăнтарса янăшăн колхозниксем умĕнче çеç мар, фронтпа çĕршыв умĕнче те айăплă.

Районри руководительсем ку колхозри лару-тăру çинчен пĕлеççĕ, анчах унти ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

**Л. РОДИОНОВ.**

## „ТĂШМАНА ÇАВ ТЕРИ ХĂВАТЛĂН ХĔСНИ"

### ХĔРЛĔ ÇАР НАСТУПЛЕНИ ТУНИ ÇИНЧЕН ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ МĔН КАЛАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар наступлени туни çинчен калакан хыпарсем Америка хаçачĕсенче паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. «Нью-Йорк таймс» хаçат Хĕрлĕ Çар Витебск районĕнче пуçланă наступление тата вăл çапăçусенче тунă çитĕнÿсене Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи вăрçăра çĕнĕ тапхăр пуçланни тата тăшмана çав тери хăватлăн хĕсни вырăнне хурса хаклать. Хаçат çакна палăртать: Хĕрлĕ Çар, виçĕ кун хушшинче тăшманăн фронтне çав тери анлăн татса кĕрсе, чылай шалалла куçнă. Нимĕçсем Витебск районĕнче çавăн пек хăватлă атака пуçланассине кĕтмен пулас. Хаçат шухăшĕпе, Витебск райнĕ—«Минскпа Брест-Литовск тата Варшава урлă Берлина каякан историллĕ аслă çул çинчи хапха пулса тăрать». Хаçат юлашкинчен: «Витебск хулишĕн пыракан çапăçу Нормандири çапăçупа тата союзниксем нимĕç çарĕсене Италире хăваласа йĕрлесе пынипе таччăн çыхăнса тăрать, мĕншĕн тесен çав операцисем пурте Берлин еннелле туртăнаççĕ», тесе палăртать.

ЛОНДОН, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Англи радиокомментаторĕ Патрик Лейси Лондонра радио тăрăх тухса каланă хăйĕн сăмахĕнче: Хĕрлĕ Çар пуçласа янă наступлени хăйĕн хăвачĕпе тата анлăшĕпе тăтăшах ÿссе пынине палăртать. Витебскпа Жлобин хулисене туртса илни çав тери пысăк çитĕнÿ тунине пĕлтерет тата вырăссем хăйсен наступленине мĕн тери анлă фронтра туса пынине кăтартса парать. Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерĕвĕн пĕлтерĕшне хакласа çитерме çук,—тесе калать Патрик Лейси,—мĕншĕн тесен, Витебскпа Жлобин хулисем тăшманăн хирĕç тăмалли çав тери вăйлă çирĕплетнĕ узелĕсем пулнă. Обозреватель çакна аса илтерет: 1941 çулта гитлеровецсем, Витебск хулине тытса илсен, вĕсем вырăссен оборонин юлашки линине çĕмĕртĕмĕр тесе тата Германи çарĕ умĕнче Мускав патне каймалли çул çинче урăх нимĕнле чăрмав та çук тесе каппайса çуйăхатчĕç. Юлашки вăхăтченех нимĕçсем Витебска пысăк вырăна хунă, вĕсем ăна хăйсен оборонин хăватлă крепоçĕ тесе шутланă. Вĕсем Витебск хулине Германи оборонин тĕп тĕрекĕ тенĕ. Хĕрлĕ Çар, хăй тунă çитĕнÿсене вăйлатса пырса, нимĕç çарне Витебскра çĕмĕрсе тăкрĕ те, хăватлăн малалла кайрĕ.

### ГЕРМАНИ ГЕНЕРАЛĔ КРЕЙХ ГРЕЦИРИ ОККУПАЦИЛЛĔ ÇАРСЕМ ПАТНЕ ЯНА ÇЫРУ

СТАМБУЛ, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Апрель уйăхĕн вĕçĕнче гитлеровецсем Грецире темиçе çĕр заложнике персе пăрахнă тата Спарта çывăхĕнчи темиçе ялти çынсене пĕтĕмпех вĕлерсе пĕтернĕ. Çак ĕçе нимĕçсем Германи генералне Крейха вĕлернĕшĕн ответлени пулать тесе пĕлтернĕ. Крейх генерала партизансем вĕлернĕ пулать. Анчах та халĕ çакă паллă пулса тăнă: гитлеровецсем, халăхран, çавăн пекех тата нимĕçсен оккупациллĕ çарĕнчи салтаксенчен чăнлăха пытарса хăварас тесе, çынсене çавăн пек нумайăн вĕлерсе пĕтернĕ. Чăнлăхĕ, тĕрĕссипе, çакăнта: Крейх генерал — нимĕçсен Пелопоннесри 41-мĕш дивизин командирĕ — Çывăхри Хĕвелтухăçне тарма хатĕрленнĕ пулнă. Анчах Крейх генерала апрелĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле, Спартăран инçех мар вырăнта, Триполисран кăнтăрти çыран патнелле каякан çул çинче (çыранра ăна подводнăй лодка кĕтсе тăнă пулнă) гестаповецсем тытнă та вырăнтах персе пăрахнă. Нумаях пулмасть 41-мĕш дивизи штабĕнчи офицер союзниксем енне тарса каçнă. Вăл хăйпе пĕрле Крейх генерал нимĕç салтакĕсене чĕнсе каланине илсе пынă. Çав чĕнсе каланине Крейх генерал шанчăклă çынсене хăй тарнă хыççăн салатса пама хушнă пулнă.

ССР Союзне хирĕç пуçланă вăрçа Крейх генерал гитлерла руководствăн йăнăшĕ тесе шутлать.

«Пирĕн çар, — тесе çырать Крейх генерал, — Российăра Германин вăрçă историйĕнче халиччен пулман поражени тÿсрĕ. Сталинград—преступникла каппайнине тата пирĕн руководство айванла хăтланнине яланлăхах чи йывăр айăпа кĕртсе айăплани пулса юлĕ».

Германи çарĕсен Грецири лару-тăрăвĕ пачах та шанчăксăр пирки, Крейх генерал нимĕçсен верховнăй командованине çав çарсене Грецирен илсе тухмалли план сĕннĕ пулнă. Анчах та çав плана йышăнман. Малалла çырура çапла каланă: «Манăн умра икĕ çул кăна: е верховнăй командованин приказне пăхăнмалла, е хамăн пĕтĕм ĕçпе ăна хирĕç тăмалла. Çав çар округĕнчех эпĕ тепĕр генералпа çыхăнтăм, вăл та ман шухăшсемпе килĕшет. Эпир иксĕмĕр те противник енне куçатпăр, çак утăма туса, эпир Германие пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкассинчен çăлас ĕçе пулăшма шутлатпăр. Вăрçăра Германи аяла пулчĕ. Нимĕç çарĕ текех Германишĕн кĕрешмест. Вăл, ĕçсĕр аптăранă çынсемпе харампырсен пурнăçне çăлса хăварас тесе, хăйĕн вилĕмĕ патнелле пырать».

### «ГИТЛЕРА ХУРЛАСА КАЛАÇНАШĂН» НИМĔÇ ÇАРĔНЧИ ОФИЦЕРСЕНЕ ПЕРСЕ ПĂРАХНИ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). США çар информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Италире тытса илнĕ пĕр нимĕç документĕнчен çакă курăнса тăрать: гитлеровецсем Гитлера хурлакан хыпарсем сарнăшăн Германи çарĕнчи 7 офицера персе пăрахнă. Гитлер çарĕсен личнăй состав управленийĕн начальникĕ генерал-лейтенант Шмундт çавăн çинчен пур дивизи командирĕсене те хăйсен офицерĕсене пĕлтерме хушнă. Вăл çапла хăратса çырнă: Гитлера хурласа калаçни малалла та пулсан, çакăн пирки аслă офицерсен ответ тытмалла пулать, тенĕ.

### БОСФОР ПРОЛИВĔ ХĔРРИНЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ВИЛЛИСЕМ ЮХСА ТУХАÇÇĔ

СТАМБУЛ, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки вăхăтра Босфор проливĕ хĕррине шыв юххи Севастопольтен «эвакуациленĕ» нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе вунă виллине илсе пырса кăларса пăрахнă, халĕ те кашни кунах кăлара-кăлара парахать. Турцире Хура тинĕс хĕрринче Зонгулдак—Синоп районĕнче тата Трапезунд районĕнче те нимĕçсен темиçе çĕр вилли йăваланса выртаççĕ.

### КОПЕНГАГЕНРИ ХУМХАНУСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио Стокгольмран Копенгаген хулинче Германие хирĕç вăйлă хумханусем пулса иртни çинчен пĕлтерет. Нимĕçсем Дани çыннисен темиçе ушкăнĕ çине пăшалсемпе пенĕ. Вилнисемпе аманнисем пур.

## Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

### Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

#### СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ШЕРБУР ХУЛИНЕ ТУРТСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн июнĕн 26-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Шербур хулинче çаплах урамсенче çапăçаççĕ. Нимĕçсем питĕ хытă хирĕç тăраççĕ, анчах та пирĕн çарсем хулана тасатсах пыраççĕ.

Котантен çурутравĕн çурçĕр-хĕвелтухăç кĕтессинче тăшман хытах хирĕç тăмасть. Çурутравăн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче Де-Ля-Аг сăмсах районĕнче тăшманăн вăйĕсем пăртак пур-ха. Тилли-сюр-Сель хулинчен хĕвелтухăçнерехре Фонтеней секторĕнче союзниксен çарĕсем малалла куçнă. Хаяр çапăçусем пулса иртнĕ хыççăн эпир хамăр позицисене лайăхлатрăмăр.

Десант çарĕсем анма пуçланăранпа Нормандири плацдармра 20.000 çын ытла тыткăна илнĕ».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн июнĕн 27-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Малтанхи хут пырса çапнăранпа 20 кун иртнĕ хыççăн союзниксен çарĕсем Нормандин тинĕс хĕрринчи укреплениyйĕнче хытă çирĕпленсе ларчĕç, ку укреплени Котантен çурутравне пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех тата питĕ пысăк порта йышăнса тăрать. Юлашки кун Шербур хулин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче хаяр çапăçусем пулса иртрĕç, çавăн хыççăн вара Шербура пĕтĕмĕшпех ирĕке кăлартăмăр. Тăшманăн кунти тăватă пехотăй дивизийĕн пысăк пайĕ тата çар суднисемпе суту-илу суднисем нумай пĕтрĕç. Шербур гарнизонĕн командующине фон Шлибен генерал-лейтенанта тата Германин Нормандири тинĕс оборонин командующине Геннеке контр-адмирала тыткăна илнĕ. Вăйлă атака хыççăн Виллер-Бокаж-Кан енче Ше тата Фонтенэ пункчĕсене туртса илнĕ. Тăшманăн бронетанковăй

вăйĕсем тата пехоти хирĕç тăпине çĕнтересе, союзниксен çарĕсем темиçе миля малалла куçнă. Пирĕн çарсем халĕ те малалла куçса пыраççĕ. Ĕнер кăнтăрла тата паян çĕрле, штормсем пулнă пирки тата хура пĕлĕтлĕ çанталăк тăнă пирки, авиаци вăйлах кĕрешеймерĕ».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн июнĕн 27-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Тилли-сюр-Сель районĕнче союзниксен çарĕсем Муан патĕнче Кан—Виллер—Бокаж хулисем хушшинчи чугун çула татнă. Пирĕн çарсем вăйлă çумăр витĕр малалла куçса пычĕç. Тăшман пехотипе танкĕсем хытă хирĕç тăраççĕ.

Котантен çурутравĕ çинче эпир тăшманăн организованно хирĕç тăракан юлашки чаçĕсене çĕнтерсе пыратпăр. Тăшман çарĕсем Мопертю аэродромĕнче, Шербуртан хĕвелтухăçнерехре тата çурутравăн çурçĕр-хĕвеланăç кĕтессинче кăна тытăнса тăраççĕ. Çурутрав çинче 20.000 çынтан кая мар тыткăна илнĕ. Вĕсен хисепĕ йышлăлансах пырать.

Ирхине начар çанталăк авиаци ĕçĕсене вăйлă кансĕрлесе тăнă».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн июнĕн 28-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Тилли-сюр-Сель хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пыракан çапăçусенче союзниксен бронетанковăй вăйĕсем июнĕн 26-мĕшĕнче пехота татса кĕнĕ вырăна аслăлатнă. Союзниксен çарĕсем, 4 миля сарлакĕш фронтра малалла куçса пырса, сулахай флангра питех те хаяр çапăçусем пулса иртнĕ хыççăн, Турвиль районĕнче Виллер—Бокаж—Кан хушшинчи чугун çула татнă. Тăшман хытă хирĕç тăрать, анчах та союзниксен çарĕсем ăнăçлăн малалла куçса пыраççĕ.

Шербур çывăхĕнче союзниксен çарĕсем Котантен çурутравне унăн сăмсахĕсем çине хĕссе кĕртнĕ тăшман çарĕсен юлашкийĕсенчен тасатаççĕ.

Начар çанталăк тăнă пирки икĕ кун хушши лăпкă тăнă хыççăн союзниксен сывлăш-çар вăйĕсем ĕнер Çурçĕр-хĕвеланăç Францире питĕ анлă тăрăхра—хĕвеланăçĕнче Шербурпа Ла-Рошран пуçласа хĕвелтухăçĕнче Орлеанпа Парижа çитиччен кĕрешнĕ. Истребительсемпе истребитель-бомбардировщиксем союзниксен тип çĕр çинчи çарĕсене пулăшса пынă».

ЛОНДОН, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем Кан хулинчен 10 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре выртакан Турвиль хулине туртса илнĕ.

### ШЕРБУРТА ТЫТКĂНА ИЛНĔ ÇАР ÇЫННИСЕН ШУЧĔ

ЛОНДОН, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 27-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: Шербурта юлашки 4 кун хушшинчи çапăçусенче 15.000 нимĕçе тыткăна илнĕ.

## Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Италири фронтра союзниксен çарĕсем çаплах тăшмана атакăлаçç. Тразимен кÿллинчен хĕвеланăçнерехре тата хĕвелтухăçнерехре тăшман хăйĕн арьергард позицийĕсем çинче хытă хирĕç тăрать. Союзниксен çарĕсем анлă фронтпа малалла куçнă. Американецсен 5-мĕш çарĕ анлă фронтпа малалла куçнă. Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем хĕвеланăç енчи çыран тăрăх наступлени туса пыраççĕ, халĕ вĕсем Пьомбино хулинчен 16 километр çурçĕрелле куçса кайнă. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Тразимен кÿллинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Киузи хулине туртса илнĕ, унтан вара темиçе миля çурçĕрелле куçнă.

Союзниксен авиацийĕн соединенийĕсем тăшманăн чугун çул сооруженийĕсене, Италин хĕвеланăç çыранĕсем патĕнче тата Адриатика тинĕсĕнче çÿренĕ суднисем çине бомбăсем пăрахнă, çавăн пекех тата тăшманăн Югославири объекчĕсене тапăннă. Иртнĕ çĕр союзниксен самолечĕсем Триест хулинчи нефтьрен тĕрлĕ япаласем тăвакан завод çине бомбăсем пăрахнă.

Çак операцисенче тăшманăнне сахалтан та 55 самолетне пĕтерсе тăкнă. Союзниксен 44 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

ЛОНДОН, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсене малалла куçма чарас тесе, тăшман хăйĕн позицийĕсене пĕтĕм фронт таккăшĕпех хытă хÿтĕлет. Союзниксен çарĕсем наступлени туса пыракан вырăнсем тăшмана оборонăра тăрса çапăçма лайăх майсем параççĕ. Çапах та 5-мĕш армийĕн чаçĕсем тăшмана пĕр чарăнмасăр хĕссе пыраççĕ, вĕсем Италин хĕвеланăç çыранĕнче Сан-Винченцо, Сассетта тата Кьюсдино хулисене туртса илнĕ. Французсен чаçĕсем хальхи вăхăтра Тразимен кÿллинчен хĕвеланăçнерехре ларакан Сан-Квирико д'Орча пункчĕ çывăхне çитнĕ. 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Киузи кÿлли районĕнче çĕнĕрен малалла куçнă, Джойелла тата Порто ятлă ялсене туртса илнĕ.

Йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсем ĕнер Будапешт районĕнчи кĕперсене тапăннă.

Союзниксен авиацийĕ Италири тата Югославири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

### МУССОЛИНИ ГЕРМАНИЕ ТАРНИ

ЖЕНЕВА, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире тухса тăракан «Газет де Лозанн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Муссолини Германие тухса тарнă. Италири фашистсен пуçлăхĕсем союзниксем Италире хăвăрт наступлени туса пынипе хăраса ÿкнĕ.

## „Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçин виçĕ çулталăкĕ" темăпа тумалли докладсемпе калаçусен ПЛАНĔ

1. Отечественнăй вăрçăн виçĕ çулталăкĕн вăрçă тĕлĕшĕнчи итогĕсем.
2. Отечественнăй вăрçăн виçĕ çулталăкĕн политика тĕлĕшĕнчи итогĕсем.
3. Вăрçăн виçĕ çулталăкĕн тулашри политика тĕлĕшĕнчи итогĕсем.
4. Ленин-Сталин партийĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешĕве организацилекенĕ тата хавхалантараканĕ.
5. Халăхăн пĕтĕм вăйне — тăшмана пуçĕпех çапса аркатнă çĕре.

**Литература:**

1. Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнеки.
2. Сталин юлташ 1944 çулхи майăн 1-мĕшĕнче панă приказ.
3. Сталин юлташ союзниксен çарĕсем Çурçĕр Франци пырса кĕни çинчен калани (1944 çулхи июнĕн 14-мĕшĕнче тухнă хаçатсем).
4. Ленин-Сталин партийĕ—фашистла пи виçĕ çулталăкĕ хушшинчи итогсем (1944 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче тухнă центри хаçатсем).
5. «Пропагандист», «Большевик», «Спутник агитатора» журналсем тата кăçалхи майпа июнь уйăхĕсенче тухнă хаçатсенчи материалсем.
6. Ярославский кĕнеки: «Ленин-Сталин партийĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешĕве организацилекенĕ тата хавхалантараканĕ».

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

### ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июнĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех
**«ПОД ЗВУКИ ДОМБР»**
ятлă музыкăллă çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсене ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

ИТ 00225 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. д. Тираж 14.400 экз.